~~8024~~ 61-66

Яков Ухсай

# ЮМАХ КĔНЕКИ



ШУПАШКАР—1961

8024

Яков Ухсай

# ЮМАХ КӖНЕКИ



Чӑваш АССР Государство Издательстви
Шупашкар—1961

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палатой
„15“ апреля 1961 г.
№ 86

## ТЕЛЕЙ ЮМАХӖ

Асап патши ҫӗрӗнче,
Выҫлӑх касси ялӗнче
Ӗлӗкрен-авалтанах
Мӑянран юрса ҫӑмах
Ҫинӗ пирӗн тӑвансем —
Апӑрша асаттесем,
Акӑш-макӑш хӗнлӗхре
Хӗсӗртен хӗсӗр ҫӗре
Сухаланӑ ҫулсерен,
Ҫулсерен, ӗмӗрсерен.
Ҫулсерен кайман инкек,
Йӗппе пусӑ алтнӑ пек
Йывӑр пулнӑ пурӑнӑҫ,
Ниҫта та ҫук пӑрӑнӑҫ.

Пысӑк катмар ҫуртсенче
Сӑрлӑ сӗтелсем ҫинче
Пуян кӑмӑлне уҫса
Янӑранӑ ҫут укҫа,
Пӗр самант та иксӗлме
Пултарман пуян пӳлме,
Сӗм-сӗм вӑрман варринче
Йывӑҫсен хӑвӑлӗнче
Юрсӑр-варсӑр ҫыншӑн мар
Пыл пылланӑ хурт-хӑмӑр.

Тӑвансем — асаттесем
Гелей ҫулӗ йӗрлесе
Кӑмӑл тулли кун курман,

Тупăк тунă юмантан.
Кĕтнĕ вăхăт ҫитнĕ те,
Пĕр хăлаҫ кăна ҫĕрте
Килнĕ канлĕ кунĕсем —
Ҫăмăл пулччăр тăприсем!
Хумсем хăйсен сиккипе
Тин ҫуралнă хумсене
Хăварнă пек, ваттисем:
— Ҫĕртисене пил,— тесе
Хуйхисене, чир-чĕре
Ан хăварччăр пире,
Сĕлĕм юрри-кĕввине
Хуччăр пирĕн чĕлхене.
Телей пултăр ҫĕр ҫинче,
Хурлăх антăр ҫĕр айне!

Ҫуллен ҫулах ҫуркунне
Ҫырма тăвăр ҫыранне
Вăйлă шыв, асар-писер
Ҫĕмĕрсе, ҫĕршер-пиншер
Аншăрт саслă ҫухăрчĕ,
Арăслан пек ыткăнчĕ,
Ырă юшкăн тăприне
Илсе кайрĕ инҫене.
Тата пĕрре кăнтăрла
Сехрене хăпартмалла
Хура пĕлĕт капланса,
Аҫа ҫапса, шартлатса,
Килсе тухрĕ аякран
Кĕтмен ҫĕртен, ăнсăртран,
Ҫавраҫил те ҫиллипе,
Иртрĕ ҫуртсен ҫийĕпе,
Тăррисене сÿрĕ те
Илсе кайрĕ инҫете.
Пĕлĕт кашти хуҫăлса
Аннă евĕр, чашкăртса
Ҫумăр хытă ҫунăҫем,
Сарă хăрăк шăмăсем
Тухнă иккен ун чухне
Тарăн ҫыран хĕррине.

Пултăм эп унта пĕрре
Масар ҫинче, чикĕре,
Куртăм пуҫ капташкине,
Катăкрах янахлине.
Ҫĕр валеҫнĕ чух авал



Хире тухнă пĕтĕм ял.
Ҫарма ҫăвар пуянсем
Тăрнаккай туя илсе
Хăйма пекех ҫĕрсене
Шăпа картнă хăйсене.
Халăх кайнă харкашса,
Сиксе тухнă тамаша.
Пуян мурĕ, ҫи те кӳп,
Ал чăмăрĕ кӳп те кӳп!
Пуянĕсем халсăр мар,
Силленет кăна чукмар,
Ҫапнă та кĕтӳҫĕнне
Хайăрнă янаххине,
Вилнĕ мĕскĕн ҫын ӳтне
Чикнĕ ҫыран хĕррине.

«Кĕтӳҫ вилли» теекен
Ансăр сăрт ҫинче пĕччен
Эпĕ тăнă вăхăтра
Сĕмленетĕп шухăшра.
Лешĕ сарă пуҫ шăмми
Ҫăмăла кайи-каймн
Ал тупан ҫинче выртать,
Пысăк шухăша ярать.
Сĕт пек шурă шăлĕсем —
Ҫашта тулли шур чăхсем —
Вĕҫсе кайнă ун иккен
Ĕлĕкех, хăй виличчен.
Алтăр пек куҫĕсене
Вăйпиттиллĕ ҫын чухне
Ӳкнĕ пĕлĕт сăнĕсем,
Ăмăрткайăк вĕҫнисем.

Мĕскĕн ҫыннăм! Самана
Лутăркана та сана,
Хăрса кайнă хирсенче
Ҫасса вĕрнĕ ҫил ҫинче
Сан хура ҫӳҫ пĕрчисем
Ларнă юр пекех тĕсе.
Мĕншĕн эсĕ тĕнчене
Килсе хуҫнă ĕнсӳне!
Этем пулса ҫӳриччен,
Хура халăх ҫĕрĕнче
Пулмаллаччĕ хурхуххи,
Ҫурмăттăн кун-ҫул хуйхи,
Мамăк пулса вĕҫĕттĕн,
Хĕр минтерне лекĕттĕн.

Пулмаллаччӗ сан иккен
Лапсӑркка аҫа кикен —
Курмӑттӑн ҫак асапа,
Вӑштин-вӑштин ҫавапа
Кӗрхи кунта касӑлса
Чӗркуҫ таран паккуса
Кӗреттӗн те хӗреттӗн,
Вӗт ҫумӑрпа ҫӗреттӗн.
Ҫавраҫилсем килӗччӗҫ,
Пӗлӗт ҫумне илӗччӗҫ.
Касӑ пӗлӗт пулӑттӑн,
Хыткан ҫӗре ҫӑвӑттӑн.
Ҫакӑ нӳрлӗхе ӗҫсе
Пусӑ пулӗччӗ ҫемҫе,
Тырӑ-пулӑ ӳсӗччӗ,
Утӑ тулӑх пулӗччӗ.
Ун чухне сана вара
Халӑх чаплӑ юрӑра
Мухтаса тав тӑвӗччӗ,
Ӗмӗр-ӗмӗр ырлӗччӗ,
Тырӑ пӗрчи тутанса
Шӑпчӑк тус та савӑнса
Лӑпкӑ ҫурҫӗр тӗлӗнче
Юрлӗччӗ сад пахчинче.
Йӗксӗксем ытла чее
Илнӗ пирӗн телее,
Хупса тытнӑ хамӑра
Ӗмӗрхи асаплӑхра.
Мӗншӗн-ха телей пире
Юп курмарӗ тӗнчере?
Мӗншӗн вӑл пире пӗлми,
Татӑк ҫӑкӑр та пами
Сулланса ахаль ҫӳрет,
Пӗр-пӗччен ларса ҫиет
Яланах пуян килте
Кукӑль те, икерчӗ те?
Вӑл пире палламалла,
Ырӑ пурнӑҫ памалла!

Тахҫанах ӗлӗк-авал
Кирлӗ чухлӗ ӑрӑскал
Турӑ хӑй валеҫнӗ, тет —
Ҫавӑн пек халап ҫӳрет.
Имӗш ун чухне чӑваш
Анкӑ-минкӗ те йӑваш,
Тӑр лӳппер пулайнӑран

Ҫăпата аран-аран
Сырса ларнă сак ҫинче
Хăрăмланнă пӳртĕнче.
Телее валеҫиччен
Вăл ҫитме ĕлкĕреймен.
Юмах юман тăрринче,
Эпир тĕрĕс ҫул ҫинче —
Ҫăмартан кĕтесси ҫук,
Чăн сăмахăн суйи ҫук.
Ҫăпата кăна сырса,
Лӳппере кăна тухса
Чăвашсем ларни ҫинчен
Юптарса юман ҫинче
Ларса суян юмаха,
Анкă-минкĕ юмаха,
Тытмалла эпир алла,
Тытмалла та ҫăлмалла
Пăчăр тĕкĕ пек тĕкне,
Пăрмалла пĕрре пуҫне,
Ĕххĕм-ĕххĕм тутарма,
Чыхтарма, астутарма,
Ҫăварне чарма пăртак
Сапмалла вĕтĕ тапак.
Юман ҫинчен антарса,
Писен ҫинче чуптарса
Чĕрĕп ҫине лартмалла,
Ҫиме ăна памалла
Суйине пуҫлас чухне
Пирĕн мăян ҫăкăрне —
Тертре кăна ĕмĕрлĕх
Пулĕ чăн-чăн тĕреслĕх.

Эпир курнă хĕн-хура
Курнă йывăр вăхăтра
Чул та пулĕ чĕлпĕрех,
Хурҫă ванĕ ҫиĕнчех,
Сивĕ шыв ҫĕртен тарса,
Пĕрчĕ-пĕрчĕ пăсланса
Ҫӳлелле хăпарĕ те
Кĕрĕ хăмăр пĕлĕте.

Асап патши ҫĕрĕнче
Выҫлăх касси ялĕнче
Ĕлĕкрен-авалтанах
Мăянтан юрса ҫăмах
Ҫисе эпир хăртăмăр,

Утсĕр чунлă пултăмăр,
Ķутамкка хыҫа ҫакса,
Сенĕк-пуртă та тытса
Телей шăпи шырама,
Вилес пулсан — сар шăмма
Ҫичĕ ютра хăварма
Аслă ҫула тухрăмăр,
Умлăн-хыҫлăн утрăмăр.

Ķаҫ чаршавĕ айĕнчен,
Ҫўлĕ тăвăн леш енчен
Тулли уйăх ҫаврашки
Хăпарсан, телей пирки
Уйăхран тĕпчерĕмĕр:
— Ăҫта-ши телейĕмĕр?
Ҫичĕ тинĕс леш енче,
Патирек утравĕнче,
Пери патши ҫĕрĕнче,
Шурă кўлĕ ҫийĕнче
Ишекен кăвакалта
Пур, тет, ылттăн ҫăмарта.
Ҫавăнта телейĕмĕр
Чĕп пек мар-ши?— терĕмĕр.
Уйăх нимĕн те пире
Ķаламасăр тўпере
Сўннĕ хыҫҫăн ирхине
Шурă ҫĕмĕрт пахчине
Шăпчăк патне кĕтĕмĕр:
— Ăҫта-ши телейĕмĕр?
Ту-паттăр ҫĕршывĕнче,
Сĕм вăрман чăтлăхĕнче
Ҫичĕ пуҫлă пĕр упа
Сар ҫупа та сар пылпа
Тăранса выртать иккен,
Ҫулленех инкек-синкек
Ķăтартать иккен пире,
Ҫывăрать хăй ўплере
Ҫу пек минтер ҫийĕнче
Пыл пек тутлă ыйхинче.
Хырăмне вăл йĕс арча,
Тимĕр кăшăллă арча
Пытарни ҫинчен юмах
Ĕлĕкрен-авалтанах
Халăх хушшинче ҫўрет,
Телее тупма чĕнет.

Арчара телей çĕрри
Пур текен çынсен юрри
Кĕвĕленчĕ çĕр çинче,
Выçă хăрăк хирсенче.
Арчана çапса ватсан,
Çĕррине тупса тухсан,
Пуринчен ватти — старик
Çĕрĕ витĕр çич шĕвик
Шăхăрсассăн, тин вара
Ырлăх пулĕ халăхра,
Теекен сăмах çӳрет,
Телее тупма чĕнет.
Чăннипех телей çапла
Тупăнни çинчен кала,
Шăпчăк, савнă тусăмăр!—
Терĕмĕр, пуç тайрăмăр.
Шăпчăк ларчĕ ир çинче
Шурă çĕмĕрт айĕнче,
Чĕвĕл-чĕвĕл кĕввипе
Калаçмарĕ пирĕнпе.

Хулăм пĕлĕте сирсе,
Вут тымарлăн хĕрелсе
Ту çинчен те аякран
Ерипе хăпаракан
Хĕвелтен тĕпчерĕмĕр:
— Ăçта-ши телейĕмĕр?

— Яланах таса куççуль
Юхнипе тасалнă çул
Пулĕ сирĕн умăрта,
Халăх тӳснĕ хĕн-хуртан
Ӳснĕ икĕ айккипе
Сĕм вăрман — кăвак тӳпе
Çулçă витĕр курăнмасть
Кăнтăрла та, ир те каç.
Кайнăçем, пыра-киле
Пăхсан — çĕлĕк ӳкмелле,
Хирĕç пулĕ çӳлĕ ту,
Акăш-макăш чăнкă ту.
Халăх курнă тертсенчен
Чулланса вăл çĕр çинче
Çулленех çĕкленнĕ те
Пуçĕ лекнĕ пĕлĕте.
Çӳлĕ тăвăн хĕрринче
Килсе тухĕ пĕр çинçе

Питĕ тăвăр пĕр сукмак,
Пĕр-пĕччен утма сукмак.
Ертсе кайĕ вăл сире
Ĕмĕтленнĕ тĕлĕре —
Курăр çутă шăтăкра
Тарăн йывăр шухăшра
Ларнă икĕ старике.
Выртĕ ылттăн кĕнеке
Сарлака сĕтел çинче.
Çак çынсем çырнисенче
Тĕпчесе шыра та кур —
Чăннипех те чăнлăх пур.
Пĕр самант та пуç усми,
Пĕр самант та тарăхми
Утăр каç та кăнтăрла
Малалла та малалла!
Эпĕ каннă чух çĕрле
Çăлтăр-хĕрсемпе пĕрле
Манăн арăм, савнă чун,
Ырă уйăх тĕттĕм чух
Шурă кĕмĕл çутăра
Тытĕ сирĕн çулăра.

Савăнса итлерĕмĕр,
Тавтапуç, хĕвелĕмĕр!

Çĕрле уйăх çутинче,
Куллен хĕвел ăшшинче
Эпир йышлă ушкăнпа
Сĕм вăрман хушши çулпа
Çичĕ уйăх утрăмăр,
Типнĕ хыççăн сыпрăмăр
Хĕрнĕ ăша кантарма
Курăк çинчи сывлăма.
Лăстăк-лăстăк çăпата
Саланса юлать çулта,
Кивелсе çири кĕпе
Кирĕкленчĕ пĕтĕмпе,
Аманать çара ура
Вĕçлĕ чуллă тăпрара.

Ирхине, пĕррехинче,
Хăмăр пĕлĕт хушшинчен
Курăнса каять пире
Çÿхеленнĕ тĕтрере
Çÿлĕ ту — патне пыма,

Пĕччĕншер тăрса утма
Тăсăлса выртать сукмак,
Питĕ ансăр çеç сукмак,
Виçĕ çухрăм е ытла
Шалалла та шалалла
Шăтăк тăрăх утрăмăр,
Утрăмăр та куртăмăр
Хулăм ылттăн кĕнеке
Вулакан ик старике —
Çӳçĕсем вĕсен шап-шур,
Кĕркунне пĕрремĕш юр
Кăн-кăвак таса ирпе
Лăпăс-лăпăс ӳкнĕ пек.

Харпăр хăй шĕлепкине
Хĕстертĕмĕр хул айне,
Пилĕк таран пуç тайса,
Кăкăр çумне ал тытса,
Хамăр мĕншĕн килнине
Каласа пĕлтертĕмĕр:
— Ăçта-ши телейĕмĕр?
Пур-ши, çук-ши?— терĕмĕр.

Çичĕ тинĕс леш енче,
Усал патша çĕрĕнче
Чике старик — Хурсухал
Пурăнать, тет, пит усал,
Пит усал та пит пуян.
Унăн пур, тет, йĕс вăрман,
Йĕс вăрманĕ варринче,
Сĕтрен тунă кӳллинче
Пур, тет, кĕмĕл кăвакал,
Халь те, ĕлĕк те авал
Мамăк йăва çавăрман,
Пĕртте чĕпĕ кăларман.
Кăвакалăн ăшĕнче
Çичĕ ĕмĕр тăршшĕнче
Ӳснĕ ылттăн çăмарта,
Çавă хытă ылттăнта
Пирĕнех телейĕмĕр
Пурăнать-ши?— терĕмĕр.

Икĕ çын кĕнекине
Умĕнчи сĕтел çине
Лаппи уçса хучĕç те:
— Çав-çав çĕрте, çав çĕрте

Сирĕн,— терĕç,— пулмалла,
Инкексем те курмалла,
Ырлăхсем те тупмалла.
Халăх ĕмĕр тăршшĕнче
Тӳснĕ асап чулĕнчен
Пулса ларнă чăнкă ту,
Пĕлĕт çӳлĕш çӳлĕ ту.
Çак ту урлă каçсанах
Курăнать аякранах
Ĕмĕрхи хуралçă пек
Ватăран та ват тирек,
Лăпкă ларать ир те каç,
Çил вĕрсен те, кашламасть.
Унăн çӳлĕ тăрринчи,
Кутамас турат çинчи
Аслă ăмăрткайăкран
Пĕтĕм тарăхнă чунтан
Ыйтăр сирĕн телее
Йĕксĕксем ытла чее
Пытарса тытни çинчен,
Пур-и, тейĕр, çут тĕнчен
Арки çинче пурăнăç,
Килмелле-и савăнăç
Йĕппе пусă алтнă пек
Ĕçлесе инкек-синкек
Курнипе ĕнсисене
Хыçакан этемсене?

Вăл сире телей тупма,
Пусмăра та аркатма
Йăлт вĕрентĕ пĕтĕмпе
Хăйĕн аслă ăсĕпе.
Йывăр çул çине тухма,
Тутă та патвар пулма
Илĕр çакă тутăра,
Сарăр ешĕл улăхра,
Ялан вăй-хал кĕртекен
Пулĕ пысăк кĕреке.

Икĕ ватта тав туса,
Пиллĕ ĕмĕр хăварса
Тăн-тăн çирĕп утрăмăр,
Сукмак çине тухрăмăр,
Çӳлĕ тăвăн аркинчи,
Хĕвел çути айĕнчи
Шурă чулсем хушшинчен

Тухакан çăл умĕнче
Тăпăр-тăпăр-тăпăртăк
Ташласа эпир такмак
Ķалама пуçларăмăр:
— Хура вăрман—хуйхăмăр.
Унăн витĕр тухрăмăр.
Ăна сирес кăмăлпа
Вăрăм çулпа, çак çулпа,
Ķу таврана килтĕмĕр.
Хурама пек пĕвĕмĕр
Çичĕ уйăх хушшинче
Пулса тăчĕ çип-çинçе —
Халĕ ĕнтĕ, ку чухне,
Ырхан ĕнсе шăтăкне
Алтăр шыв та кĕмелле —
Лартсан — çарăк ÿсмелле.
Эх-эх-эх те ай-ра-ра,
Аслă ешĕл улăхра,
Ăрăм тутăр, пар пире
Сарлака кĕрекере
Ķарланка канма шÿрпе,
Пыр тĕпне шÿме шерпет!
Вăрмансем те илтмелле,
Çарансем те сисмелле
Ушкăн халăх шăхăрсан,
Сасă кайрĕ ян та ян,
Ķу-ку теме куккукне,
Юрлама саркайăкне,
Ķăвăлтине кăвлатма,
Шаланкине макăрма
Вăл вăратрĕ пур енче
Шăрăх сывлăш ыйхинчен...
Темле алă палăрми,
Темле алă курăнми
Çеп-çемçе çерем çине
Сарчĕ пурçăн тутăрне.
Асăрха та, пăх та кур:
Ăвăс çинче пиçнĕ хур
Пăсланса пырса ларать,
Йыхăрать те йыхăрать
Нумайччен курман пирки
Çулă автан тукмакки.
Унта мĕн-мĕн пуррине,
Унта мĕн-мĕн тутлине
Ķаласа пама пĕрре,
Савăнса ларма пире

Ҫирлĕ пулĕ вĕҫĕмсĕр
Виҫĕ каҫ та виҫĕ ҫĕр.
Ĕҫрĕмĕр те ҫирĕмĕр,
Ҫанчĕ пирĕн ӳтĕмĕр,
Ҫăвак пĕлĕт айĕнче,
Ҫăпăш курăк ҫийĕнче
Вилнĕ пекех пурсăмăр
Тăсăлса ҫывăртăмăр,
Тутлă йывăр тĕлĕкре
Куртăмăр тăван хире.
Умлăн-хыҫлăн йĕркипе
Тăсăлса каять юпа.
Ҫакса тухнă мăйкăчпа
Пур ылхан юпа ҫине
Харампыр улпутсене.
Вĕсене куллен ҫисе,
Кĕвекленнĕ юн кӳпсе
Мăнтăрланнă ҫăхансен
Илтĕнеҫҫĕ сассисем.
Ял хыҫне, анкартине,
Лартнă капансем ҫинче
Ҫăвакарчăн пĕлĕт пек
Вĕҫнине курма ирпе
Халăх тухнă урама,
Халăх тухнă савăнма...

Ҫичĕ пăт та пур таран
Йывăр тутлă ыйхăран
Пурте сиксе тăтăмăр,
Тăтăмăр та утрăмăр.
Ҫӳлĕ чăнкă ту ларать,
Ту ларать те хумханать
Яп-яка та ҫăп-ҫăра
Кĕмĕл тĕслĕ кăлканра.
Йĕппиsемпе чикекен
Нăхăт хулли тĕпĕнчен
Алăпа тыта-тыта
Ерипе эпир унта
Шурăмăр та пытăмăр,
Халран кайса ыртăмăр,
Пере-пере ӳкнĕ чух
Пите чĕрчĕ вĕҫлĕ чул
Хура пĕлĕт ăнсăртран
Тухса килчĕ аякран,
Кĕр кĕрлерĕ аслати,
Ҫиҫĕмĕн хĕҫ пек ҫути

Çиçрĕ пĕлĕт хушшинчен,
Ванчĕ пирĕн пуç çинче.
Аçа çапса ун чухне
Хуçрĕ пĕлĕт каштине.
Пĕрчисем ытла шултра
Пăрлă касă çумăра
Хӳтерсе хăватлă çил
Илсе килчĕ—вырт та вил!—
Çумăр шывĕ чашкăртса,
Тăпрана та хускатса,
Чулсене те вăр та вар
Кăларса илсе хаяр
Яра пачĕ этеме
Акăш-макăш лӳшкетме.
Пирĕн урлă хумĕсем,
Кăтсăр сивĕ хумĕсем
Иртсе кайрĕç, хăйсемпе
Юхтарса чылай çынна
Тĕттĕм тарăн çырана —
Çĕрĕç çырма тĕпĕнче
Юшкăн тăпра айĕнче.
Пирĕн савнă юлташсем,
Хумпа юхса кайнисем,
Курмĕç пурнăç малалла,
Хулпуççи çине çурла
Çакса тухмĕç хирсене
Шур тĕтреллĕ ирхине,
Теветкел текерлĕксен
Тĕвик-тĕвик сассисем
Шурлăх çинче пулнине
Илтмĕç ĕнтĕ малашне,
Шăнкăр-шăнкăр сассипе
Юхакан çăл шывĕпе
Çумĕç ачи-пăчине,
Вĕсене лапкка çине
Выртта раймĕç, ерипе
Шăлмĕç хурăн милĕкпе.

Виçĕ кун хушши аран
Алăран та ураран
Юн юхтарса шурăмăр,
Чул ту урлă каçрăмăр.
Ки-как, ки-как тăрнасен
Виç кĕтеслĕ картисем
Тыла пуççи айĕнче
Хăрса кайнă шурсенчен

Тарнӑ чух йӗре-йӗре
Ӗсӗклеҫҫӗ тӳпере —
Вӗсене те савӑнма,
Чӗписене тӑрантма
Пирӗн типӗ ҫӗр ҫине
Телей килмен ҫуркунне.

Яланах тавралӑхра
Асран кайми сухара
Ҫеремленнӗ уй-хире
Пӗчӗккӗн чӗре-чӗре
Ӑантӑрла та, каҫ та ир
Тарӑхаттӑмӑр эпир.
Чикӗпе виҫсе тухман,
Пуртӑпа картсем хывман
Сӗм хура вӑрмансенче,
Ӑайӑк-кӗшӗк юрринче
Савӑнса утма этем
Тупаканччӗ чӗр илем.

— Йывӑҫ хуппипе мӑян
Ҫитерсе, эпир санран
Ырлӑх курӑпӑр, чӑваш! —
Терӗ те улпут-тавраш
Хӗстерсе пыра-киле
Ӑилчӗ пирӗн ҫӗрелле,
Пирӗн юрлӑ халӑха
Тытса хупрӗ хурлӑха,
Вӑрмансене кастарса,
Пысӑк сулӑсем ҫыхса
Атӑлпа та Сӗвепе
Ӑсаттарчӗ ҫӑвӗпе.
Ӑтӑрсемпе тилӗсен
Ытарма ҫук тирӗсем
Тӗнчери хуласенче
Майрасен ҫухисенче
Ҫӳре-ҫӳре мухтава
Ӑӗртрӗҫ пирӗн ҫӗршыва.
Эх, еплеччӗ ир ҫинче!
Шӑпчӑксем ҫинҫен-ҫинҫен
Шӑрататчӗҫ юррине,
Ӑантаратчӗҫ чунсене...
Ҫуркунне ҫапла пӗрре
Шӑпчӑксем тытма пире
Хушакан пичетлӗ хут
Янӑ чунилли улпут.

Улăхра танккарăмăр,
Шăпчăксене пурсăмăр
Тытрăмăр, хайхи вара
Хамăрăн тавралăхра
Вăрмансăр та юрăсăр
Эпир тăрса юлтăмăр.

Пысăк çулăн юппинче
Пĕлĕт çӳлĕш пĕр-пĕччен
Ĕмĕрхи хуралçă пек
Лара парать пĕр тирек.
Ун тăрринче ларакан
Аслă ăмăрткайăкран
Халăхпа тĕпчерĕмĕр:
— Ăçта-ши телейĕмĕр?
Çичĕ тинĕс леш енче,
Хура шывлă кӳлĕре,
Ĕмĕр каç пек тĕттĕмре
Пурăнать, тет, авалтан,
Хĕç пек çӳхе пĕр çăрттан.
Çакă пулăн вăлчинче
Выртакан телей çинчен
Хунă юмах тĕрĕс-ши,
Ырлăх тупса пулĕ-ши?

Пуш хирти хуралçă пек
Ватăран та ват тирек
Тăрринче вăл ларчĕ те:
— Шырăр,— терĕ,— пĕр çĕрте.
Манăн пур сире канаш.
Яланах эсир йăваш
Çӳресе, йĕре-йĕре,
Тупас çук телейĕре.
Çичĕ тинĕс леш енче,
Тимĕр утрав варринче
Кӳлĕре çăрттан та çук,
Вăлчинче телей те çук.
Юмах юман тăрринче,
Эсир выçă çĕр çинче.

Çак çулпа кайсан-кайсан,
Тепĕр вичĕ талăкран
Хăрăк вăрман варринче
Çӳлĕ тăвăн хĕрринче
Пысăк шăтăк курăр та
Харсăр тăрăр çавăнта.

Тарăн ылттăн ӳплере
Сарлака кĕрекере
Куççульпе тата юнпа
Тăранса выртать упа.
Унăн çичĕ пусĕнче
Сире тертлĕ çĕр çинче
Яланах асап та хур
Кăтартма çич шухăш пур.
Вăл упа çура чухне
Ĕçнĕ, тет, çĕлен сĕтне,
Çавăнпа та чĕринче,
Çавăнпа та ăсĕнче
Чашкăрса тăрать çилли,
Ĕçмелли те çимелли
Умлă-хыçлă пултăр ун
Çын чĕри те чĕрĕ юн.
Вăл упа хирсем çине
Тырă çитĕннĕ чухне
Пăрлă çумăр хăвалать,
Хаяр аçа çаптарать,
Каярах, пыра-киле,
Курăка та ĕнтмелле
Шăрăх сывлăш кăларса,
Илес-милес алхасса
Çичĕ пуçлă çич пырпа
Вĕрсе выртать çак упа.
Эсир ăна вĕлерме,
Кĕлне çилпе вĕçтерме
Пущ хирти хуралçă пек
Ватăран та ват тирек
Айĕнчен халь илĕр хĕç,
Ик енчен те çивĕч хĕç!
Эсир ăна мĕнлелле
Каласан — итлемелле
Çӳрĕ çиçĕм пек касса,
Пĕрчĕ-пĕрчĕ вакласа
Хурĕ хăвăрттăн кăна
Çичĕ пуçлă упана.

Ăмăрткайăк каймалла
Хушнă пек, эпир çула
Тĕрĕс-тĕкел тухрăмăр,
Шухăш тытса утрăмăр,
Виçĕ талăк вĕçĕмсĕр
Кăнтăрла та, каç та çĕр
Кайнă хыççăн çул çинче,

Чăнкă тăвăн хĕрринче
Тухса тăчĕ кашламан
Çулçăсăр çара вăрман.

Туратсем çинче унта
Ункă-ункă пулнă та —
Çĕленсем мĕн пур çĕрте
Çакăнса тăраççĕ те
Чашкăраççĕ — сехремет
Чуна витĕр витерет.
Лашаран та пысăкрах
Калтасем сиксе анчах
Çӳренине куртăмăр,
Пĕр вырăнта тăтăмăр.
Çак хăрушă самантра
Хытса кайрĕ ал-ура.
Этемсен те выльăхсен,
Кайăксен те шăммисен
Куписем çинче тăкак
Шыраса ула курак
Вĕçнине курса таçтан
Хăй тусне чĕнет çăхан.

Пуш хирти хуралçă пек
Ватăран та ват тирек
Айĕнчен илсе çума,
Усала курсан, касма
Çакнă хĕçе тытрăмăр,
Йĕннинчен кăлартăмăр.
— Пур çĕлен-калтасене
Вакласа, вăрман çулне
Уç, асамлă хĕçĕмĕр,
Ыткăн ĕнтĕ! — терĕмĕр.
Шанкăр уяр кăнтăрла
Сехрене хăпартмалла
Çиçĕм çиçнĕ пек çиçсе
Кайрĕ пирĕн хĕç вĕçсе,
Вăркăнса вăр-вар кăна
Касрĕ çĕлен-калтана,
Вăрçăран пăртак канма
Килсе выртрĕ вăл ума.
Ӳплере лӳппер ыйхи
Сирĕлсен, упа хайхи
Çапăçса телей илме
Килнĕ ушкăн этеме
Пĕтересшĕн мĕкĕрсе,

Вăрмана та кисретсе
Çил кăларчĕ — пĕлĕтре
Қарăнса, йĕре-йĕре
Вĕçекен тăрнасене
Илсе çапрĕ çĕр çумне.

Çулçăсăр çара вăрман
Айĕнче эпир аран
Йывăçсене тытрăмăр,
Ыталаса выртрăмăр:
— Эй, асамлă хĕçĕмĕр,
Ыткăн ĕнтĕ!—терĕмĕр.
Çил пăртакçă лăплансан,
Тарăн ылттăн шăтăка
Талпăнса васка-васка
Пырса çитсе куртăмăр
Мĕн пулнине пурсăмăр:
Çичĕ пуçран пĕрне çеç
Қасса татма пирĕн хĕç
Ĕлкĕрменччĕ ун чухне,
Вакламанччĕ пӳ-сине.
Эпир пĕтĕм çилĕпе
Пуртăпа та сенĕкпе
Упана ислетрĕмĕр,
Пысăк вучах чĕртрĕмĕр,
Типĕ вутă хутăмăр.
Кĕлне эпир пурсăмăр
Ывăç-ывăç пухрăмăр,
Çилпеле вĕçтертĕмĕр:
— Қилчĕ-ши телейĕмĕр
Чăннипех те?—терĕмĕр,
Пĕтĕмпе йĕри-тавра
Пăхса тăтăмăр вара.

Шалкăм çумăрлă тӳпе
Асамат кĕперĕпе
Қарăнса, мерчен-ахах
Сапнă пек тавралăха
Чиперлетнĕ — пурсăмăр
Чĕркуç çине лартăмăр,
Пуш хирти хуралçă пек
Ватăран та ват тирек
Айĕнчи хĕçе парса,
Телей çулне кăтартса,
Пире тĕрĕс шухăша
Кĕртнĕ ăмăрт юлташа

Тав туса пуç тайрăмăр,
Вăрăм ĕмĕр сунтăмăр.

Хамăр савнă çĕрелле,
Тунсăхланă килелле
Утнă чух йĕри-тавра
Çăра курăк улăхра,
Çутă шывĕ çыранта,
Ешĕл çулçă вăрманта
Хирĕç пулчĕ çул çинче.
Халăх акнă хирсенче
Тулăх тырă хумханать,
Хумханать те авăнать,
Пучахĕсем — турпасла,
Хăмăлĕсем — хăмăшла.
Çĕре ӳкнĕ пĕлĕт пек
Выльăх-чĕрлĕх кĕтӳпе
Тухса тулнă ирхине
Сарлака çерем çине.
Тăкăс курăк ырринче
Енесен çиллисенче
Чара тулли çу пулма
Пухăнать çăра хăйма.
Асаттесем асăнма,
Пухăнса пĕрле ларма
Лартнă пиллĕ йăмрасен
Хушшине пырса çитсен,
Эпир пурте лартăмăр,
Лартăмăр, юрларăмăр
Халиччен те халăхра
Янраса курман юрра.

1

Эх, телей-телейĕмĕр,
Ĕмĕр-ĕмĕр кĕтрĕмĕр,
Йăлтăр-йăлтăр ялтăран
Çичĕ-çичĕ çăлтăра
Хура вăрман хушшинчен
Тата çӳлĕ ту çинчен
Пĕтĕм халăх пурсăмăр
Пăха-пăха тăтăмăр.

2

Эх, телей-телейĕмĕр,
Ĕмĕр-ĕмĕр кĕтрĕмĕр,
Тăвăр йăран хушшинче,

Сухапуçĕ умĕнче
Йывăр утса çӳресе,
Халран кайса ĕнтĕхсе
Вырта-вырта вилтĕмĕр,
Ҫурăк пулса ӳсрĕмĕр.

3

Эх, телей-телейĕмĕр,
Ĕмĕр-ĕмĕр кĕтрĕмĕр,
Ҫурăк пулса ӳсрĕмĕр,
Ҫĕрхи кунта çĕртĕмĕр.
Вăйлă çилсем килчĕç те
Пире илчĕç пĕлĕте —
Çумăр пулса антăмăр,
Уй-хире шăвартăмăр.

4

Эх, телей-телейĕмĕр,
Ĕмĕр-ĕмĕр кĕтрĕмĕр,
Тырă пулса лартăмăр,
Вырмара касăлтăмăр,
Улпут хуçа умĕнче,
Ылттăн тирĕк çийĕнче
Эпир апат пултăмăр,
Юнĕ тăрăх чупрăмăр.

5

Эх, телей-телейĕмĕр,
Ĕмĕр-ĕмĕр кĕтрĕмĕр,
Акă ĕнтĕ тупрăмăр,
Асаплăхран тухрăмăр.
Аслă ăмăрткайăка
Тавлă юрă-такмака
Ҫаласа мухтарăмăр,
Вăрăм ĕмĕр сунтăмăр.

Ăмăрткайăк сывă мар,
Вăл вилни çинчен хыпар
Шартлама хĕлле пĕрре
Сиксе тухрĕ тĕнчере,
Шĕкĕр Мускав хулинчен
Çитрĕ юр кĕрчĕсенче
Путса ларнă ялсенче
Пирĕн халăх чĕрине
Пысăк хуйхă пĕлтерме,
Ват çынна та йĕртерме

Ӑнсăртран пĕрре ирпе
Ҫилчĕ çуна йĕрĕпе —
Сывлăш хумĕ ун чухне
Ҫĕрейменччĕ пӳртсене.
Йывăça та çуракан,
Чĕрпĕр-чĕлпĕр тăвакан
Ҫăтсăр-хăтсăр сивĕре
Вут çунтарчĕ-çке пире,
Ҫĕлĕке хул хушшине
Хĕстерсе, ял варрине
Ушкăн-ушкăн тухрăмăр,
Ялав айне тăтăмăр,
Унăн ырă сăнарне,
Пире телей панине
Пĕтĕм халăх — пурсăмăр
Пĕр самант та манмăпăр.
Вăл тĕреклĕ çулĕнче
Вăхăтсăр вилни çинчен
Хурлăх пырĕ тĕнчере
Тата нумай ĕмĕре.

1937 — 1955

## АВТАН ЫЛХАНӖ

Атӑл хӗрринчи ялта
Ӗлӗк пулнӑ пӗр автан,
Ҫиккирикле ӑслӑ чун
Шурӑмпуҫӗ килнӗ чух
Мучипе кинемее
Ирхи ҫутӑ телее
Кӗтсе илме вӑратса
Тӑнӑ хытӑ авӑтса.

Чӑхсемпе автан пӗрре
Чаваланнӑ тирӗсре.
— Сӑмсапа сӑха-сӑха
Тӗплӗн шырӑр, тупӑр-ха!—
Тесе ӗҫчен сар автан
Тӑрӑшнӑ чух ӑнсӑртран
Сиксе тухнӑ йӑлтӑркка
Ҫаврака ылттӑн курка,
Тата кӗмӗл кашӑк та
Выртах панӑ ҫавӑнта.

Сар автан ҫунат сарать,
Ҫатан ҫине хӑпарать,
Авӑтать те авӑтать,
Авӑтса ҫапла калать:
— Асаттепе асанне
Хальччен пӗлмен ыррине,
Курнӑ хӗн те тӳснӗ хур.
Халӗ ӗнтӗ мулӗ пур.
Ылттӑн-кӗмӗл пирӗн ку!



Ки-ки-рик! Ку-ку-рекку!
Куркана та кашăка
Тăрăшса такка-такка
Сăмсисемпе тасатсан,
Урисемпе çутатсан,
Ăслă сар автан çумне
Чăххисем çатан çине
Юнашар пырса ларса
Кăтикленĕ савăнса:
— Какакак та кикикик,
Усă парĕç. Кăть-кăтик!

Иртсе пынă урампа
Сиктĕрмеллĕ урапа.
Пырса тăрать мăшăр ут,
Урапа çинчи улпут
Ларкăчри тарça хушать,
Хăтăрса çапла калать:
— Илсе пар-ха эс мана
Çав кашăкпа куркана!

Хăпăл-хапăл хай автан
Пырĕнче сас пур таран
Авăтать те авăтать,
Авăтса çапла калать:
— Мучипеле карчăка
Хĕрхенмесĕр, кашăка
Тата ылттăн куркана
Мĕншĕн илтĕн эс хăвна?
Ман ылханăм пулĕ ку.
Ки-ки-рик! Ку-ку-рекку!
Тарçине улпут калать:
— Ха, итле-ха! Ылханать.
Выçă хырăмлă хресчен
Лăпăр-лапăр килĕнче
Ўснĕ хăй, анчах та ун
Пур иккен ылханлă юн.
Ўктĕр-ха çатан çинчен.
Туяпа яр уринчен!

Лăпкă кӳлĕ хĕрринче,
Çавра сĕтел хушшинче
Пăсланать вĕри апат.
Леш улпут лара парать.
Ылттăн курка — умĕнче,
Кĕмĕл кашăк — аллинче.

Леш автан кӗтмен ҫӗртен
Сиксе ҫитнӗ ялӗнчен,
Авӑтать те авӑтать,
Авӑтса ҫапла калать:
— Мучипеле карчӑка
Хӗрхенмесӗр, кашӑка
Тата ылттӑн куркана
Мӗншӗн илтӗн эс хӑвна?
Икӗ ваттӑн килӗнче
Ҫӑкӑр ҫук сӗтел ҫинче.
Ман ылханӑм пулӗ ку.
Ки-ки-рик! Ку-ку-рекку!

Ҫӑтӑ куҫ-улпут итлет,
Шӑннӑ пек тӑр-тӑр чӗтрет,
Чӗнтерет сӗтел умне
Пӗтӗм тарҫи-тӗрҫине:
— Автана халех тытса,
Кайса ярӑр сив пусса!

Тарҫи-тӗрҫи сиккелет,
Хӑвалать те хӳтерет.

Пӗтӗм вӑйӗ пур таран
Хӑтӑлма тӑрать автан,
Пӗр чупать те пӗр вӗҫет,
Тӗк те мамӑк вӗҫтерет,

Парӑнмасть усалсене,
Ырса ҫитнӗ ҫунатне
Лӑстӑр-лӑстӑр тутарать,
Йывӑҫ ҫине хӑпарать,
Авӑтать те авӑтать,
Авӑтса ҫапла калать:
— Мучипеле карчӑка
Хӗрхенмесӗр, кашӑка
Тата ылттӑн куркана
Мӗншӗн илтӗн эс хӑвна?
Икӗ ваттӑн килӗнче
Ҫӑкӑр ҫук сӗтел ҫинче.
Пӳрт хутма та юлман вут.
Ҫич инкек сана, улпут!
Ман ылханӑм пулӗ ку.
Ки-ки-рик! Ку-ку-рекку!

Тарçă-тĕрçĕ сиккелет,
Хăвалать те хӳтерет.
Паттăр автана тытать
Сив пусса яра парать.

Тарăн шывлă пусăра
Çăварне кара-кара
Антăхать те вăй-халтан
Ķалать харсăр сар автан:
— Çăт, çăт, пырăм, çăт-ха!— тет,
Шыва ĕçсе пĕтерет.
Акă тепĕр ирхине
Лăпкă кӳлĕ хĕррине
Уçăлма улпут тухать,
Хырăмне шăлса утать,
Итлес килет каннă май
Тĕрлĕ саслă чăй та чай
Ķайăксен юррисене.
Анчах савăннă чухне
Хăямачĕ — леш автан
Типсе ларнă пусăран
Авăтать те авăтать,
Авăтса çапла калать:
— Мучипеле карчăка
Хĕрхенмесĕр, кашăка
Тата ылттăн куркана
Мĕншĕн илтĕн эс хăвна?
Ман ылханăм пулĕ ку
Ки-ки-рик! Ķу-ку-рекку!

Çиленсе улпут итлет,
Тарçисене чĕнтерет:
— Итлĕр-ха эсир мана,
Вĕри хутнă мунчана
Хупса хурăр автана!

Çăтă та усал улпут
Хушнă пек, тип-типĕ вут
Турттарать тарçи-тĕрçи.
Тăррине вĕçсе çерçи
Ларайми вĕри мунча
Шартлатса ларать анчах.
Çакă вĕри мунчана
Хупса лартсан автана,
Тĕк те, мамăк та ĕнет,
Ķиккирикĕ те пиçет.

Пётём вăйĕ пур таран
Мекĕрленчĕ те автан:
— Хĕсĕн, пырăм хĕсĕн!— тет,
Пĕрĕхет, шыв сирпĕтет.

Лĕп çеç мунча ăшшинче
Сарлака лапка çинче
Патша пек ларать автан,
Пĕтĕм сасси пур таран
Авăтать те авăтать,
Авăтса çапла калать:
— Мучипеле карчăка
Хĕрхенмесĕр, кашăка
Тата ылттăн куркана
Мĕншĕн илтĕн эс хăвна?
Икĕ ваттăн килĕнче
Çăкăр çук сĕтел çинче.
Пӳртне хутма юлман вут.
Çич инкек сана, улпут.
Ман ылханăм пулĕ ку.
Ки-ки-рик! Ку-ку-рекку!

Тарăхса улпут итлет,
Шăннă пек тăр-тăр чĕтрет:
Чĕнтерсе илет умне
Пĕтĕм тарçи-тĕрçине:
— Итлĕр-ха эсир мана,
Тытса пусăр автана!
Тĕкне сирĕн çăлмалла,
Пуçне мана памалла.

Мĕскĕн автан килĕнче
Лăпкă çурçĕр тĕлĕнче
Выçă чух кашта çинчи
Тĕлĕкре çеç тул пĕрчи
Çисе пăхнă, ун пирки
Ырхан пулнă тукмакки.
Улпут тарçă-тĕрçине
Панă автан какайне,
Мăйĕпе пуçне анчах
Çинĕ хăй вăл тарăхсах.

Килĕнче автан вăрçи
Пĕтнĕ хыççăн çине çи
Хĕпĕртенĕ те хуçа
Шăкăл-шăкăл калаçса

Мухтанса ларма ёҫке
Пухнӑ пысӑк кӗреке,
Шурӑ хут ҫырса юри
Чӗннӗ пулнӑ таврари
Улпутсене пӗтӗмпе
Чиперкке майрисемпе.

Уйӑх та пӑхать тулта.
Ҫуртасем те кил-ҫурта
Хурӑн ҫулҫи пек ҫап-ҫут
Кӑтартаҫҫӗ — леш улпут
Никама та паллаймасть,
Чӑх пек нимӗн те курмасть.
Янӑ иккен сар автан
Усал ӑншӑрт та ылхан.
Мӗн иленнӗ-ши ҫурта,
Мӗн-ха пулнӑ улпута?
Анасланӑ пек ансат
Ун ҫӑварӗ уҫӑлать,
Пырӗ тӗпӗнчен — шалтан—
Кӑларать пуҫне автан:
— Тарӑх ӗнтӗ, эс, улпут!
Киккирик!— тесе виҫ хут
Авӑтать те авӑтать,
Пур ҫынна та хӑратать.

Чирпе хӑртӑннӑ улпут
Ҫичҫӗр ҫитмӗл ҫичӗ хут
Темӗнле те тухтӑра
Тӗнчере шыра-шыра
Ҫӳресен те ылханран
Хӑтӑлма пултарайман.
Ҫул ҫинче е килӗнче
Вӑл ларать-и сак ҫинче,
Инкексем тӳсме сехет
Кӗттермест, хӑех ҫитет,
Карланка ыраттарать,
Ҫӑвара та кӑтӑклать,
Пырӗ тӗпӗнчен — шалтан
Кӑларать пуҫне автан,
Авӑтать те авӑтать,
Улпута ҫеҫ ылханать.

Кайӑк-кӗшӗк йӑвара,
Пулӑ та тӳлек шывра
Тутлӑ кӑтӑш пулнӑ чух

Шартах сиксе хăраса,
Мунчари пек тарласа
Вăранса каять улпут.
Питĕ тĕрĕс вирĕ хут
Пырĕ тĕпĕнчен—шалтан —
Ĕăларать пусне автан,
Авăтать те авăтать,
Пĕтĕм çурта янратать.

1938

---

## КĔСЛЕÇĔПЕ УПА

Ним илме те чухлаймарĕ
Пасарта Микуç пичче,
Кунĕпех ун-кун танккарĕ
Ват шăмшакĕ ыриччен.

Сутрĕ вăл пĕр тĕркĕм пушăт,
Пилĕк мăшăр çăпата,
Хыпалать те — енчĕк пушă,
Кĕмĕлсем сахал унта.

Кучченеç илсе пулмарĕ,
Пуш алпах киле килме
Намăс мар-и, мăшкăл мар-и
Тăнлă пуçлă этеме?

Пултăр чун канма хаваслăх!
Мĕн пулин те илмелле!
Илчĕ йăнтăр-йăнтăр саслă
Хĕрĕх хĕлĕхлĕ кĕсле.

Вăл ăна çакать тирпейлĕн
Халĕ çурăмĕ хыçне,
Çамрăк çын пекех телейлĕн
Уттарать тăван ялне.

Хĕлĕхне шăна лексен те,
Лăпкă çил те хирĕçле
Сĕртĕнсен кăшт, халĕ ĕнтĕ
Янраса илет кĕсле.

Çул хитре, утма хавaслă,
Йк енче вăрман çăра.
Сулланать хăй тĕллĕн алă,
Ывăнма пĕлмест ура.

Кайăксен пусланнă ĕнтĕ
Кĕввисем унта-кунта.
Юрлама пĕлмест пулин те —
Кăвăвик! — тет уйăп та.

Ярăнать çӳлте шаланкă.
Ун мĕлки ӳкет ума.
Ешĕл курăкла уçланкă
Йыхăрать ларса канма.

Сывлăш сулхăн, витĕр уçă.
Çăкасен шăрши пылак.
Киленсе пĕрре Микуçăн
Ларасси килет пăртак.

Вăл екки ярса канмалăх
Уçланка кĕрсе каять,
Хăнари пукан пек лайăх
Тунката çине ларать.

Чĕркуççи çине хурать вăл
Йăнтăр-йăнтăр кĕслине,
Пăрчăкан чуппи пек çăмăл
Çӳретет пӳрнисене.

Хăй чунне парса кĕслеçĕ
Киленсе вылянипе
Кĕввисем тухса вĕçеççĕ
Курăнман çунаттипе.

Çил вĕрмест. Уяр çанталăк
Кайнă тутлă ыйăха.
Шăтăрт-шăтăрт сас сасартăк
Вăратать тавралăха.

Пуçтармасăр пĕлтĕр юлнă
Хăрăк-харăк вут-çаппа
Çĕмĕрсе тухать хăюллăн
Йк уран тăрса упа.

Ваттине хӑй ӗнтӗ ватӑ,
Ашкӑнмалӑх вӑйӗ пур,
Мӗкӗрсе те, ҫухӑрса та
Ташласа килет маттур.

Сӗм вӑрманӑн утаманӗ
Урипе ҫупа-ҫупа
Сикнине эсир курман-и?
Пултарать иккен упа.

Чунилли, вӑрман тискерӗ,
Кун пекех ташлать тесен,
Микуҫран кулса пӗтерӗ
Пӗтӗм ялӗ витлесе.

Икӗ урипе хавассӑн
Пилӗкне тытма пӗлет,
Шӑппӑн-шӑппӑн, шавсӑр-сассӑр
Тунката тавра иртет.

Акӑш-макӑш утаманӑн
Мӗншӗн шӑп ташши вара?
Ма тесен, пӗлетӗр, унӑн
Ҫӑмламас ҫемҫе ура.

Ак вӑл тӳрӗ, ак вӑл хуҫӑк
**Авкалать пӗвне, сикет.**
Хӑраса кайса Микуҫӑн
Ал-ури тӑр-тӑр чӗтрет.

Тарӑхса Микуҫ мӑнтарӑн
Ашӗнче вӑрҫать хӑйне:
— Эп ӑҫта тарма пултарӑп?
Лекрӗм мӑшкӑл капкӑнне.

Ватӑлсан та, ӑсӑм катӑк,
Вилмӗп кил сакки ҫинче,
Пӗтмеллех пулать сасартӑк
Ҫак упа ытамӗнче.

Ывӑнманччӗ, мӗншӗн лартӑм
Эп уҫланкӑваррине?
Мӗншӗн хытӑ янраттартӑм
Йӑнтӑр-йӑнтӑр кӗслене?

Хам ума упа камичĕ
Сирпĕнсе килес чухне
Маларах çăпан тухинччĕ
Шĕвĕркке пӳрне вĕçне!

Пĕт эппин эс, хывăх пуçăм,
Ҫилентер упа чунне!..
Çӳçĕнчен туртса Микуçăн
Вăрçасси килет хăйне.

Вăрмантан çак чунилесшĕн
Тухасса пĕлес пулсан,
Вăл кунта кĕрсе çӳресшĕн
Чарăнмастчĕ ăнсăртран.

Ҫăштăр-кăштăр вăл утатчĕ
Ерипен кăна ялне,
Пуртăпа ватса туратчĕ
Çĕр çăтманĕ кĕслине.

Ывăнмасăр, чарăнмасăр
Урипе çупа-çупа,
Тунката тавра пĕр харсăр
Çаврăнса сикет упа.

Вăйĕ-халĕ çук Микуçăн,
Чунĕ хытнă пек тăрать.
Хăраса анранă куçĕ
Виç упа пек кăтартать.

Аллисем кĕсле тытмаççĕ.
Ӳкерсен, çитет инкек.
Куçĕсем упан пăхаççĕ
Вутлă икĕ кăмрăк пек.

Шăмарса Михал Иванчă
Тяппипе тыттарсанах,
Вилнĕ пек Микуç йăванчĕ
Йăкăлттин туса анчах.

Тĕлĕнсе упа йăвашшăн
Пăхкалать этем çине,
Тепĕр хут сиксе ташласшăн
Ҫаркалать урисене.

Чеерех пулма Микуҫăн
Шухăш пур, упа ҫине
Пăхкалать пĕр хĕсĕк куҫĕ
Леш пăхса тăман чухне.

— Чунилли, вăрман тискерĕ,
Пыршăма пăтратиччен
Қаласа юлам-ха,— терĕ
Ăшĕнче Микуҫ пичче.

Қĕслине хăвăрт майларĕ,
Пĕр пӳрни хĕлĕхсене
Лексенех, упа пуҫларĕ
Тăрăс-тăрăс ташшине.

— Урисем иккен кĕҫтеҫҫĕ.
Қăмăлне кӳме пулать,—
Тенĕ чух Микуҫ кĕслеҫĕ
Тунката ҫине ларать.

Хальхинче вăл хăвăрт-хăвăрт
Ҫӳретет пӳрнисене.
Вăрманта пăртакҫă тăвăр
Пулмалла кĕввисене.

Ҫавăнпа вĕҫсе каяҫҫĕ
Қăн-кăвак тӳпенелле,
Упана сикме хушаҫҫĕ
Ҫăмăллăн та ҫӳлелле.

Кукăрне чăнах та кукăр
Урисем, анчах кунта
Йăкăш-йăкăш, тăпăр-тăпăр
Ташлама упа ăста.

Хĕл хута вăрман кахалĕ
Ҫывăрать те — вăй нумай.
Ҫинĕ вăл ҫулла сахал-и
Пыл карасĕ те какай.

Утарта вĕлле те ватнă,
Ҫинĕ пыл вăрман патши,
Ҫавăнпа иккен хăватлă
Ярăнса пырать ташши.

Чылаях ёне, пăру та
Çухалать çуллен ялта,
Çавăнпа та питĕ тутă
Вăл çӳренĕ вăрманта.

Кĕслине татти-сыпписĕр
Каласа ларса пулмасть.
Ерипен çеç сисĕнмесĕр
Тĕттĕм пулĕ, çитĕ каç.

Çичĕ-сакăр чалăш юлнă
Хĕвеле анса ларма,
Çавăнпа Микуç хăюллăн
Шухăшлать килне кайма.

Тунката çинчен вăл анчĕ.
Кĕслине кала-кала
Ерипен кăна уттарчĕ
Малалла, тăван яла.

Лăпланать чĕри Микуçăн,
Кĕслинче нумай хăват
Пуррипе вăл каçăр пуçăн
Паттăр пек хăйне туять.

Икĕ аллипе пĕр харăс
Савăнса çупса, упа
Йăкăш-йăкăш, тăрăс-тăрăс
Ташласа пырать çулпа.

Сăрт çинче кĕтӳ çӳретчĕ,
Ёнесен мĕлкисене
Каç хĕвелĕ ӳкеретчĕ
Çухрăм тăршшĕ инçене.

Çывăхра Михал Иванчă,
Йăраланчăк утаман,
Пынине курсан, хăпарчĕ
Çăп-çăра хура тусан.

Тапса сикрĕ ушкăн сурăх,
Ёнесем хӳрисене
Тăратаççĕ, пусă тăрăх
Саланаççĕ пур енне.

Упапа Микуç кĕслеçĕ
Малалла та малалла
Утнăçем пырса тухаççĕ
Ĕнтрĕк тĕлĕнче яла.

Йыт-качка шăрша чухланă —
Акăш-макăш упине
Куриччен тарса пытаннă
Çурт-хуралтăсем айне.

Ку камит чиперрĕн irттĕр!—
Ун çине шикпе анчах
Вăрттăн çурăк-çарăк витĕр
Пăхкалать ача-пăча.

Хăлтăр-халтăр, тăйлăк-тайлăк,
Кивĕ лапчăк пÿрт умне,
Кĕввине татса, сасартăк
Чарчĕ вăл хаяр тусне.

Пÿрт тăрри çĕрсе йăваннă,
Кив тăпра çинче паян
Ашкăрса ÿссе кашланă
Кантăр пек çăра мăян.

Килкарти те çук Микуçăн.
Çук нимле хуралтă та.
Пур енче те хир пек уçă
Курăнса выртать кунта.

Ялĕнче упа хыпарĕ
Саланать иккен, вара
Алăра кÿсек-чукмарĕ
Хатĕр кÿршĕ-аршăра.

— Ватăлсан та ăс кĕмерĕ
Анкă-минкĕ миммÿне.
Чунилли, вăрман тискерĕ,
Пăвтăр-и ĕнесене?—

Теççĕ те килсе тăраççĕ
Кÿршисем мĕнпур енчен,
Çухасем тума шутлаççĕ
Çăмлă паттăр тирĕнчен.

Мĕкĕрсе Михал Иванчă
Вутлă кăмрăк пек кусне
Чарчĕ те сиксе хăпарчĕ
Хăлтăр-халтăр пӳрт çине.

Кĕтесрен пĕр пысăк татăк
Пĕрене илет упа,
Вăркăтса ярать сасартăк
Вăл ăна пĕтĕм вăйпа.

Малалла вăрман тискерĕ
Пĕтĕмпе пĕренене
Кăларса тытса силлерĕ
Çиллине тӳсмен енне.

Кулăшла, анчах хаяррăн
Пуçсенчен тыттариччен
Кӳршĕри çынсем чăл-паррăн
Тарчĕç пӳрт таврашĕнчен.

Аякра хăйсем тăраççĕ,
Чăмăрланă алăпа
Юнаса çăвар караççĕ
Типĕ пыр тĕппи саспа:

— Сывă пултăр ăсăр-пуçăр!
Эй, сыхланăр! Эй те эй!
Çĕр çăтман упи Микуçăн
Валеçет пире телей!

Пĕр канаш тăвар-ха, халăх!
Çакă çăмлă инкеке
Хальтерех йĕрке тумалăх
Чĕнтерес уретнике!

Микуçне виç хут чĕр хулă
Çурăм тăрăх вашлатса
Иртнĕ чух пит усă пулĕ,
Ăс вĕрентĕ, иçмасса.

Эрленсе Микуç шутларĕ,
Аллине чĕри патне
Тытрĕ те çапла каларĕ
Йăлăнса этемсене:



— Ырă халăх, кӳршĕ-аршă,
Ан хускатăр инкекне,
Ан чĕнсемĕр-ха тархасшăн
Чунилли уретнике!

Кӳсекпе чукмар та пуртă
Тытнипе мĕскер усси?
Ман хитре кĕслеçĕм пур та —
Савăнтарĕ ун сасси.

Ман упам пĕрех тĕпренчĕк
Тивмĕ пурлăх таврашне,
Вăл чипер кăна вĕренчĕ
Хамăр халăх ташшине.

— Ташлаттар эппин пăртакçă,
Тĕлĕнтер эппин пире!—
Теççĕ те çынсем тăраççĕ
Халь те питĕ инçетре.

Пур çынна та курма уçă
Сарлака çерем çинче
Каласа ларма Микуçăн
Пур вăй-халĕ чĕринче.

Пăрчăкан пекех чупаççĕ
Пӳрнисем васка-васка,
Кĕввисем сиксе тухаççĕ
Хӳхĕм сасăллă, яка.

Йăнтăр-йăнтăр янрасассăн,
Пӳрт çинчен сикет упа,
Ярăнса пырать хавассăн
Урипе çупа-çупа.

Çамрăк каччă пек ансатăн
Çирĕп тытрĕ пӳ-сине,
Лăпчăнса та, авăнса та
Тĕлĕнтерчĕ çынсене.

1940—1953

## ЮМАН ЧУКМАР

Тахҫанах, ӗлӗк-авал,
Чалӑш ура кӑвакал
Юрӑсем те юрласа,
Кӗнеке те вуласа
Тӗлӗнтернӗ вӑхӑтра
Эпӗ хамӑр таврара
Пӗлкелеттӗм кӑшт кӑна
Икӗ мӗскӗн ват ҫынна.
Вӑрӑм ӗмӗр тӑршшӗнче
Ансӑр ана ҫийӗнче
Иккӗш лекнӗ асапа,
Кӑчӑрт-кӑчӑрт ҫурлапа
Вӗлтӗр-вӗлтӗр тыррине
Вырса авнӑ пилӗкне,
Ӗҫре пӗлмен ӳркенме,
Тултарман ҫапах пӳлме,
Чакнӑ тар тӑкса хӑвачӗ,
Тутанман вӗсем кулачӑ.

Умлӑн-хыҫлӑн ҫулсерен
Кантӑр мар, сар вӗлтӗрен,
Хупахпа ҫӑра мӑян
Ашкӑрса хӑпаракан
Юрлӑ ялӑн хӗрринче
Кивӗ хура пӳртӗнче
Йывӑр ватӑ ӗмӗрте
Тарӑхатчӗҫ иккӗш те —
Шӑкӑл-шӑкӑл калаҫма,
Хӑйсене те тӑрантма
Кирлӗ пулнӑ сарӑ ывӑл,—
Пӗр ачасӑр питӗ йывӑр.

Шăвăнать çул хыççăн çул.
Шĕпĕр-шĕпĕр тăр куççуль
Хĕретсе тăрать куçа,
Шурă çӳç витет пуçа,
Ал-ура та имшеркке,
Пуснă утăм та кĕске,
Кĕрхи шăннă курăк пек
Чаксах пырать вăй-тĕрек,—
Мĕн тесен те, кирлĕ ĕнтĕ
Тăр ухмах ача пулин те.

Хушка çăлтăр тӳпене
Çĕкленсессĕн, ирхине
Килнĕ-килмен ыйхинчен
Карчăк тăрса килĕнче
Пăшăлти кăвас чĕрес
Йӳçнине пырса итлес
Текелесе тăрăшса
Кайрĕ ăслă шухăша:
Хучĕ вăл сĕтел çине
Йӳçсе çитнĕ чустине,
Унаса васка-васка
Турĕ пысăк чăмăркка,
Лартрĕ алă та ура
Кăвапа та пуç, вара
Çын пекки пулса выртсан,
Лартрĕ куç та кăмрăкран.
— Ывăл пул!— тесе пĕрре,
— Паттăр пул!— тесе тепре
Çурăмран ик хут çапса,
Кĕреçе çине лартса
Хайхи чуста этеме
Чиксе лартрĕ чун илме —
Кăмака сап-сарă паттăр
Пĕçерсе эппин кăлартăр!

Виçĕ каç та виçĕ кун
Иртнĕ хыççăн паттăр чун
Калаçма пĕлет чĕлхе,
Тапса ячĕ питлĕхе,
Сиксе анчĕ урайне,
Чыхăнтарчĕ амăшне
Вĕтĕ кăмрăкпа, кĕлпе,
Тăррăс ура тапнипе
Кисрентерчĕ пĕтĕмпе,
Кăмака çине хăпарчĕ —
Иван пултăр унăн ячĕ!

Иртрĕ ĕнтĕ виçĕ çул.
Килĕнче укçа та мул,
Хăтлă пурнăç, пархатар
Пуласси-ха паллă мар,
Хырăмне чыхса анчах
Чапа тухрĕ сар ача.
Урăм-сурăм кахала
Питлесе ялтан яла
Култарса çӳрет элек,
Çерçисем чĕвлетнĕ пек
Сарăлать те сарăлать,
Ӳпререн вăкăр тăвать.
Илтме çăмăл ухмаха,
Йывăр аслă халăха.
Вăтанма çук-ши типтерĕ
Кăмака çинчи лӳпперĕн?

Ашшĕ çилĕ килнипе
Кунĕпе те çĕрĕпе
Хăр хăртса тăка-тăка
Вăрçать ватă карчăка:
— Тăранма вăрахлăха
Çитмелли çав çăнăха
Мĕншĕн илтĕн ырçаран,
Йӳçсе çитнĕ чустаран
Мĕншĕн ху ухмах пирки
Турăн этем кĕлетки?
Тумаллаччĕ пӳремеç
Çеп-çемçе те тутлă çеç.
Намăса кӳместчĕ халĕ
Кăмака ăшши кахалĕ?

Чăнласах ача кахал,
Тăр мăран, анчах та халь
Ивана хăртса тăкма,
Тиркеме те хурлама
Кирлĕ мар,— тесе юмах
Шырама хушать сăмах.
Кăпăш йӳçнĕ чустаран
Тунă ӳт аран-аран
Пиçнĕ-çке кăмакара,
Пулнă вăл имшер вара.
Ватă карчăкĕн килте
Пулнă чĕрĕ çирĕк те
Авăс вучĕ — пĕçерме,
Кирлĕ пек ăна хĕртме

Тупӑнман иккен юманӗ,
Ҫавӑнпа начар Иванӗ.

Ҫавӑнпа вӑл ыйӑха
Питӗ хытӑ ернӗ-ха,
Чӑн-чӑн вӑйлӑ этеме
Пӗтӗмпе тухса ҫитме
Пӗвӗ-сийӗ ӳснӗ май
Ҫывӑрас пулать нумай,
Ӑмака хӗртмен ӳтне
Ҫутӑ ӑшӑ ҫуркунне
Хӗвелпе хӗрттермелле,
Вӗри мунча кӗртмелле,
Ешӗл милӗкпе кӑна
Ҫапмалла унта ӑна,
Кунсерен сӗтек апат
Памалла ӑна хӑват —
Тин вара килме пултарӗ
Улӑпла этем хастарӗ.

Тупнӑ хӑй валли йӑва
Ӑмака ҫинче Иван,
Каласан та, хӑнк тумасть,
Ӑнтӑрла та, ҫӗр те каҫ
Сисмест пӑрҫа ҫыртнине,
Ҫапать ыйхӑ чӑптине.
Ӑшне чӗрсе чӗрӗп пек
Выҫӑ вӑхӑт килнипе
Ыйӑхне ярать уҫса.
Мӑшлатса суйлать пӑрҫа
Амӑш сапнӑ кӗл ҫинчен;
Хӑйӗн пӗвӗ вунҫичче
Ҫитнӗ пекех яштака,
Хулпуҫҫи те сарлака,—
Тахҫанах кӗрнеклӗ каччӑ
Тытмалла алла тӑпачӑ!

Тӑвӑл пӗр эрне хушши
Вӗҫсӗр-хӗрсӗр ши те ши
Шӑхӑрса ҫӳре-ҫӳре
Витсе тухать ҫурт-йӗре,
Тӑвать хулӑм кӗрт айне,
Ҫил ҫиллес ачисене
Ҫухӑртать мӑръесенче,
Хирсенче, урамсенче
Купалать юр пит те тарӑн —
Шыв кӳме каймасть хӗрарӑм.

Амăш чунтан ӳкĕтлет:
— Қай, ачам, тархасшăн,— тет.
— Пăрçа çисе ларнă чух
Имшерленчĕ манăн чун,
Чĕптĕм вăй та çук, анне.
Мана халĕ юр çине
Кутсăр-пуççăр çил-тăман
Йăвантарĕ,— тет Иван.
Амăш тупрĕ пĕр хайла,
Ывăлне йăпатмалла
Турилкке тулли икерчĕ
Çуласа пĕрре çитерчĕ.

Кун пек техĕм кучченеç
Çисе каннă хыççăн çеç
Қăмака çинчен Иван
Ырă амăш вăрçасран
Сикрĕ-анчĕ, ӳкнĕ пек
Ырса йывăр пĕвĕпе
Силлентерчĕ урайне,
Çĕтĕк-çатăк кĕрĕкне
Йăпăрт-япăрт тăхăнчĕ,
Шур шăл витĕр шăхăрчĕ,
Селĕм авăк кĕвенте,
Мăшăр витре илчĕ те
Утрĕ тарăн çырмана,
Урипе пĕрре кăна
Тапнă хыççăнах пăр ванчĕ,
Шăнкăр-шăнкăр шыв хумханчĕ.

Ăсса илнĕ витрере
Çăт та çат çапса хӳре
Курăнса каять малтан,—
Ярăнать иккен çăрттан.
Сарă паттăр йăл кулать,
Ташласа çапла калать:
— Қилĕмре аннеçĕм халĕ
Çатмара сана ăшалĕ!

Çăрттан пуçне кăларать,
Йăлăнса çапла калать:
— Мĕн пайти сана ара
Халĕ манăн какайра?
Тутлă мар, Иван, шывак.
Пасарта та йӳнĕ хак.
Тата шăммăм йĕплĕ-çке.

Мана яр-ха ирӗке!
Асӑнмалӑх сыхлама
Ил-ха виҫӗ хуппӑма.
Ҫирлӗ чух пӗрне ӗнт эсӗ,
Туп вара телей кӗтесӗ!

— Сӑмахна ан ман, ҫӑрттан,
Ан суйсам!— тесе Иван
Виҫӗ ҫутӑ хуппине
Сӑсе чикрӗ кӗсйине,
Тарӑн авӑра пулла
Яра пачӗ каялла,
Утрӗ мӑшӑр витрепе,
Йӑлхав шӑнӑр туртнипе
Кӗрӗкне аран-аран
Хывса ҫакрӗ пӑтаран,
Анасларӗ, турткаланчӗ,
Кӑмака ҫине хӑпарчӗ.

Кутсӑр-пуҫсӑр ҫил-тӑман
Тепӗр виҫӗ талӑкран
Чарӑнмарӗ, пӑртсене
Хӑсе кайрӗ кӗрт айне,
Тип утта капансенчен,
Улӑма анкартинчен
Турттарма пултарайман,
Шӑварма та шыв ҫукран
Пӗтӗм выльӑх-чӗрлӗхе
Халӑх кӗртнӗ хӗнлӗхе.
Кавлеме юлман енне
Мӗкӗрсе тӑрать ӗне.
Витере ырхан лаша
Ҫинчӗк улӑм ҫеҫ ашса
Кӗҫенсе чӗнсен те, халӗ
Вӑранмасть тӗнче кахалӗ.

Ашшӗ-амӑш сивӗре
Тӑр-тӑр тунӑ кив пӑртре,
Ашӑнман кӑмакана
Сӗтеле те пукана
Хутнӑ вутӑ вырӑнне,
Каснӑ сак хӑмисене.
Вӑратсан та, вӑранман
Кӑмака ҫинче Иван,
Карланки ҫеҫ ҫывӑрмасӑр
Панӑ хӑр-хӑр, хӑр-хӑр сасӑ.



4. Я. Ухсай.

Виçĕ талăкран кăна
Тăрса ларнă Ивана
Ватă амăш ӳкĕте
Вăрçса кĕртме тăчĕ те
Тустарать сăмахĕпе,
Хăмсарать ухвачĕпе:
— Вăрмана кай-ха пĕрре!
Вутă кирлĕ сивĕре!
— Пăрça çисе ларнă чух
Имшерленчĕ манăн чун,
Аллăма йăтма та халь
Чĕптĕм чухлĕ çук вăй-хал.
Пĕрре вĕрĕ çил-тăман,
Йăкăлт ӳкĕп,— тет Иван.
Йăпатса-туса мĕн калăн,—
Яланах уяв кахалăн.

Аптăранă кăвакал
Кутăн чăмнă тенĕ пек,
Ватă ашшĕ ĕнтĕ халь
Тупрĕ хăй валли инкек,
Шур пас тытнă пӳртĕнче
Ушапуç кашти çинчен
Илчĕ чул — пĕлев хăйра,
Лач сурса хăйра-хăйра
Картари пĕрех чуна —
Мекекек качакана —
Урăм-сурăм çил чухне
Пусса пачĕ карчăкне —
Чустаран унанă паттăр
Хытă çитĕр, вут турттартăр!

Тата тепĕр самантран
Лăкăр-лăкăр тăвакан
Хурантан какай шăрши
Салансан та, анмĕ-ши
Пăр пек сивĕ çапакан
Кăмака çинчен Иван?
Пĕр анмасăр тăр наян
Хырăмне панк тултарсан
Çывăрса каяс чухне
Пуллăн çутă хуппине
Кăварпа ĕнтсе çунтарчĕ,
Кĕсйине кĕлне пытарчĕ.

Кун иртет те çĕр иртет.
Тăман çаплах ӳхĕрет,

Хăрăм пек сĕм тĕттĕм каç
Шурă уйăх курăнмасть,
Сар хĕвел те кăнтăрла
Тарса кĕрет çăмхалла
Хулăм пĕлĕт хушшине,
Чухăн пӳртĕн мăрйине
Çил кĕрет те ахăрать,
Йван ятне асăнать,
Шăп çеç çурçĕр тĕлĕнче
Калать хăлхи патĕнче:
— Эсĕ, Иван, ăçтиçук,
Çăкăр чыхрăн, çирĕн çу,
Чиксе хутăн хырăмна
Мекекек качакана,
Çапах икĕ ват çынна
Сивĕре лартма сана,
Кăмака ăшши хантарĕ,
Питĕ пысăк намăс мар-и?

Акă виçĕ талăкран
Ялт сиксе тăрать Иван,
Тăр-тăр шăнса кӳтнипе
Пĕтĕм пĕвĕ-сийĕпе
Ĕнтĕркет, аран сывлать,
Кăтăр-кăтăр хыçкалать
Кирĕкленнĕ ĕнсине,
Пăхкалать мачча çине.
Урайне те тытнă пас,
Маччана та тытнă пас.
Сикрĕ-анчĕ ӳкнĕ пек,
Ытла йывăр пĕвĕпе
Силлентерчĕ урайне,
Хĕрĕх саплăк кĕрĕкне
Йапăрт-япăрт тăхăнса,
Чи малтан сукмак хывса
Тухса утрĕ çырмана,
Урипе пĕрре кăна
Тапса илчĕ, шыв кăларчĕ,
Кĕсйинчен илсе кĕл ячĕ.

— Эп сана, çăрттан юлташ,
Хĕрхенме килмен, чăш-паш
Тăвăп ĕнтĕ хальхинче
Çаврака çатма çинче.
Хăтăлаймăн аллăмран!—
Тет çиллес саспа Иван.

Çакă пысăк тĕркĕше
Сиснипе çăрттан ишсе
Пычĕ те пуçне кăларчĕ:—
— Мĕн ыйтать, Иван, ват карчăк?

— Эсĕ ыррăн хушнипе
Эпĕ утнă çул-йĕрпе
Васкаса паян ирех
Пĕр лашасăр-мĕнсĕрех
Қаçăртса туртисене
Манăн чалăш пӳрт умне
Пырса лартăр йăлт кăна
Çитмĕл çич çара çуна!
Хĕрĕх саплăклă тумпа
Эпĕ шăнтăм, çавăнпа
Халĕ, çакă ирхине,
Қилсе лартăр ман çине
Сахрун купса çĕлĕкĕ,
Васлей пуян кĕрĕкĕ!
Урăх уесри Михал
Патăр мана кăвакал,
Қилтĕр унăн килĕнчен,
Тĕпсакайĕ тĕпĕнчен
Йӳç сăра та пĕр пичке.
Михал тӳстĕр инкеке!—
Терĕ те Иван уттарчĕ,
Қăмака çине хăпарчĕ.

Чăннипех те тамаша
Пуçланать-мĕн: юр ашса
Халăх ун-кун чупкалать,
Пĕççисене шарт çапать.
Хапхасем пĕтĕм ялта
Хăйсемех унта-кунта
Усăлаççĕ шăлт та шалт.
Çунасем ак çак самант
Қилсерен таçта кайма
Шуса тухрĕç урама,
Лашана та кӳлĕнмен,
Пĕккине те лектермен,
Çил пек хăвăрт вашкăртса,
Хăйсемех çулне тупса
Чалăш пӳрт умне пыраççĕ,
Умлăн-хыçлăн чарăнаççĕ.

Қу ялтан чылай инçе
Пĕр хула пасарĕнче

Яштака Сахрун купса
Лавккара пустав сутса
Ал çупатчĕ,— ăнсăртран
Темĕнле хăяматран
Çил килет те çĕлĕкне,
Хăнтăр тирлĕ çĕлĕкне
Хывса илет пуçĕнчен,
Çаврăрать çуртсем çинче.
Хăнтăр çĕлĕк пĕлĕтре
Чавка пек вĕçсе пĕрре
Явăнса çухалнине
Янкăр уçă ирхине
Курчĕ те хула пасарĕ
Тĕлĕнсе кайса шавларĕ.

Хĕрĕх çухрăмри ялта,
Çил-тăмансăр вырăнта
Ятлă çын — Васлей пуян —
Илĕм-тилĕм ир паян
Кӳлнĕ чаплă мăшăр ут,
Мăшăр ут мар, мăшăр вут.
Вăл хирте чипер кăна
Чуптаратчĕ хăнана.
Çул та питĕ такăрччĕ,
Çанталăк та ырăччĕ.
Акăш-макăш çил-тăман
Сиксе тухрĕ ăнсăртран,
Юра пăр-пар вĕçтерет,
Кĕрĕкне хывса илет,
Çав самант килет сасартăк
Тепĕр хут уяр çанталăк.

Урăх уес ялĕнче,
Михал куштан килĕнче
Пӳрт тулли хăна-вĕрле
Юрласа кĕрле-кĕрле
Хӳхĕм ларнă самантра,
Кăвакалĕ хуранра
Пиçнипе хускалнă чух,
Алăка кĕрет-ши чун —
Алăк хăй яр уçăлать,
Çил кĕрет те ухтарать,
Тарăн тĕпсакайĕнчен,
Икĕ юпа хушшинчен
Пичкене илет йăтса,

Кăлтăр-кăлтăр кустарса
Кăларать урамалла,
Хуранти кăвакала
Вĕçтерсе таçта шутарчĕ,
Шўрпине кăна хăварчĕ.

Кахалне кахал Иван,
Анчах халĕ çывăрман,
Çăрттан ăна кучченеç
Ярасса вăл илтнĕ çеç.
Çăмартан кĕтесĕ çук,
Чăн сăмахăн суйи çук.
Çырмари чее çăрттан
Ивана манса кайман.
Кĕрĕк те пур, çĕлĕк пур.
Тĕсĕпе те хăй маттур
Курăнса ларать паян
Нар пек питлĕ сар Иван.
Кăвакалĕ — умĕнче,
Йывăç алтăр аллинче.

Кăмака çинчи Иван
Ятлă çын пекех аван,
Тумĕпе те яп-яка,
Сăнĕпе те мăнтăркка
Лараятчĕ йăл кулса,
Каннă пек ура усса,
Кăвакал тукмаккине
Тытнăччĕ çăвар умне.
Алăк уçăлчĕ яри,
Ни алли çук, ни ури,
Çил пулчĕ-ши, те такам,
Курăнмасăр утакан,
Пирĕн сара паттăра
Чип-чипер йăтса кăларчĕ,
Пĕр çуна çине вырттарчĕ.

Çара çунан ик енче
Çĕнĕ селĕм ўрече.
Тутă паттăр сар Иван
Сылтăмми çине чавсан
Тайăнса канса выртать,
Такăнмасăр такмаклать:
— Ырă пулă хушнипе
Манăн çуна йĕррипе
Вирлĕ çил те çитейми,

Кайăк та хӳтерейми
Хăвăрт пытăр ним çула
Пăхăнмасăр пур çуна!
Пурăш варне çитмелле,
Тарăн вара кĕмелле.
Çил-тăман вара лăпланĕ.
Çавăнта улпут вăрманĕ.

Çитмĕл çич çара çуна
Çитмĕл çичĕ акăш пек
Чашкăртса вĕçет кăна
Паслă сывлăш çулĕпе,
Анса каймасть варсене,
Пырса тухмасть çул çине,
Питĕ вирлĕ пынипе
Юра лекмест, тӳрĕлле
Лерелле те лерелле
Вашкăртса пырать пĕр авăк,
Чарăнать хайхи сасартăк.

Хăй хăяккăн выртнă та
Такмаклать Иван кунта:
— Пулă панă ырлăхпа
Çитмĕл çичĕ çунапа
Атте-анне килĕнчен
Куçа уçса хупиччен
Кăра çил пек вăр кăна
Килсе çитрĕм вăрмана.
Манăн пӳрт те лартмалла,
Манăн вут та хутмалла.
Ĕçсĕр-хĕлсĕр выртакан
Пăчкă-пуртă вырăнтан
Йăнтăр-йăнтăр калаçса
Сиксе тăтăр, йывăça
Пĕр самант касса çӳретĕр,
Çунасем çине тиетĕр!

Çивчĕ пăчкă, пуртă та
Кайăк пек унта-кунта
Ярăнса вĕçсе çӳрет,
Йывăç касса ӳкерет.
Пĕр çĕрте те шăплăх çук
Пур çĕрте те тук та тук,
Пур çĕрте те каснăран
Кĕрлесе ларать вăрман.
Çил те килчĕ ахăрса,

Вӗрен йӑтса шӑхӑрса,
Шавлаттарчӗ вӑрмана,
Ҫитмӗл ҫичӗ ҫунана
Пуслӑх хурса хӑварчӗ,
Юр тустарчӗ, хӑй тарчӗ.

Пуш ҫуна ӳречинчен
Уртӑнать те хальхинче
Сар Иван сиксе тӑрать,
Ӑшкӑрса такмак калать:
— Пулӑ панӑ ырлӑхпа,
Ҫитмӗл ҫичӗ ҫунапа
Ват аттеҫӗм савӑнма,
Ват аннеҫӗм ташлама,
Пӳрт лартма нумай каска
Пачӗ те васка-васка
Хӑй тиерӗ сӗм вӑрман.
Халӗ ӗнтӗ пӗр юман
Манӑн ҫамрӑк пуҫӑма
Инкексенчен хӑтарма
Чукмар пулма чутлантӑр,
Ҫуна ҫинӗ йӑвантӑр!

Йӑнтӑр-йӑнтӑр пӑчкӑ та,
Ҫивчӗ пысӑк пуртӑ та
Таҫтан тухрӗҫ сиккипе,
Ҫӑрттан пулӑ хушнипе
Тӳрӗ ҫамрӑк юмана
Ӑсрӗҫ пӗр самант кӑна,
Ӳхӗртсе ӳкерчӗҫ те,
Туратне ирте-ирте,
Саваларӗҫ, яп-яка
Туса пачӗҫ пӗр каска.
Пуҫ ҫурма хитре чукмар
Иван ҫумне юнашар
Пырса выртрӗ, шӑп пулчӗ—
Тӳстӗр вӑрман улпучӗ!

Итлесе тӑрать улпут.
Вӗҫсӗр-хӗрсӗр хутран-хут
Мӗншӗн халӗ кӑнтӑрла
Шавлать вӑрман хӑрушла?
Улпут чуста паттӑртан
Туса хурӗ, тытӑнсан,
Йытсем валли пашалу.
Ахалех нумай шалу

Пама енчĕк салтать-и,
Тытать хурал салтакĕ?

Ытла шавлă пулнăран
Пасне тăкнă вăрмантан
Чуста паттăр сар Иван
Çитмĕл çичĕ çунапа
Çулсăрах çара уйпа
Вĕçтерсе улпут умне
Тухиччен мăйăхсене
Пĕтĕрет салтак та тарçă,
Вĕшлесем вĕрсе тăраççĕ.

Хăнк та тумасть сар Иван,
Пĕр эшкер салтак курсан,
Илтсен йытсем вĕрнине,
Яра парать такмакне:
— Пулă панă ырлăхпа,
Çитмĕл çичĕ çунапа
Килтĕм эпĕ вăрмана,
Ĕмĕрте пĕрре кăна
Аттене савăнтарма,
Аннене ташлаттарма
Илтĕм вут та пĕрене,
Килте питĕ кирлине.
Çăрттан пулă хушнипе,
Пĕтĕм халăх çиллипе
Кӳтесе эппин, чукмарăм,
Çич юта тылла хаяррăн!

Чи малтан чукмар çӳле,
Кăн-кăвак тӳпенелле
Вашлатса хăпарчĕ те
Кĕчĕ хулăм пĕлĕте.
Ăмăрткайăк пек чукмар
Калама та çук хаяр
Анчĕ пĕтĕм вăйĕпе,
Иртрĕ вăл юр çумĕпе,
Тытăнать хайхи вара
Вĕшлене те салтака
Пуçсенчен шакка-шакка
Ислетме те лапчăтма,
Леш тĕнчене ăсатма.
Чĕлпĕр-чĕлпĕр тăм чӳлмекĕн
Саланать пăшал кӳпчекĕ.
Уй-хирте юман чукмар
Тепĕр хут вĕçсе вăр-вар

Çавăнать те тӳпене,
Хулăм пĕлĕт хушшине
Пытанать пĕр курăнми,
Чылайччен шавне пами
Тăнă хыççăн вăй-хăват
Шилесе каллех анать,
Хальхинче улпут çуртне,
Чăлтăр-чалтăр кантăкне
Çĕмĕрсе кĕрсе каять,
Тепĕр кантăкран тухать,
Шăхăрса кĕрет пĕрре,
Шăхăрса тухать тепре.
— Вырт, чукмар!—тесе хуçи
Ķаласан çеç, итленçи
Пулса юман чукмарĕ
Пырса выртрĕ, каймарĕ.

Мĕн-ха пулнă чукмара?
Ķермене кĕрсе вара
Тунă мĕскер тамаши?
Мĕн унта шыранă-ши?
Ашкăнман ахаль унпа,
Вăл шыранă улпута,
Урайне çапса ватса,
Чĕлпĕр-чĕлпĕр салатса
Чул пураллă нӳхрепе
Анса кайнă çиллипе,
Çамкинчен пĕрре тыттарнă,
Улпута кăнтса хăварнă.

Çитмĕл çич çара çуна
Çук, кĕмест яка çула,
Ķăпăш юрлă уй-хирте
Çил пек çăмăл, вирлĕ те
Малалла та малалла
Вашкăртса кĕрет яла.
Çунасем ял хĕрринче,
Чалăш пӳртĕн умĕнче
Умлăн-хыçлăн чарăнсан,
Чуста паттăр сар Иван
Ĕçчен пек сиксе тăрать,
Такмакне çапла калать:
— Пулă панă ырлăхпа
Сиртĕм эпĕ асапа.
Халĕ йывăç хăй пушантăр,
Çуртăм хăй ларма пуçлатăр!

Кĕпĕр-кĕпĕр пĕрене
Тăйлăк-тайлăк пӳрт умне
Ярăнса кустарăнать,
Купана кĕрсе выртать.
Ушкăн-ушкăн кĕреçе
Тытăнать хайхи ĕçе,
Никĕс валли çĕр чавать,
Шурă юра хуратать,
Пуртăсем сиксе тухаççĕ,
Туклатаççĕ, калаçаççĕ.

Чуста паттăр килĕнче
Пултăм эп пĕррехинче,
Иванпа хам чун уçса,
Шăкăл-шăкăл калаçса
Лăпкă ларнă чух хĕлле
Шăпчăкпа çерçи пĕрле
Пĕр турат çинче ларатчĕ,
Хĕрлĕ юр тулта çăватчĕ.

1936—1953

## ЯППУН ЮМАХĔ

Ваттисем илтсе-пĕлсе
Қаласа параççĕ:
Пулнă çутă тĕнчере
Чул касан ăстаçă.

Пурăннă вăл чип-чипер,
Шунă ун кун-çулĕ.
Çапнă та, тӳссе тăман,
Ваннă пысăк чулĕ.

Тимĕрçĕ хĕрте-хĕрте
Шăрантарнă хурçă.
Çавăн пек ĕçле-ĕçле
Тĕрекленнĕ чулçă.

Ĕçĕнчен ырса килсен,
Шăммисем сураççĕ.
Çавăнпа ĕçчен этем
Тарăхнă пăртакçă.

Тĕрĕсси çав тĕрĕсех,
Қирлĕ сывлăх паттăр:
Қулленех çӳл ту çинче
Чулсене ватса тăр!

Ĕмĕр иртĕ, тет, хуллен,
Пулăп эпĕ ватă.



Ун чухне вара епле
Чулсене, тет, ватăп?

Кукăр йывăç пек пĕччен
Пулăп эп мăнтарăн,
Вилĕме кĕте-кĕте
Пуç усса çеç ларăп.

Ĕмĕрте çĕрме пуян
Ман пĕрре пуласчĕ,
Çеп-çемçе тӳшек çине
Пашт кĕрсе выртасчĕ!

Қалама çеç ĕлкĕрчĕ,
Пулчĕ тем амакĕ:
Аллинче тăра парать
Пĕр автан тукмакĕ.

Қив çатан вырăнĕнче
Чул хӳме çӳп-çӳлĕ.
Қилкартин чи варринче
Çавракa пĕр кӳлĕ.

Ун çинче хĕвел çути
Выляни илемлĕ.
Шурă тĕплĕ кӳллине
Акăшсем иленнĕ.

Тĕлĕнсе кăна ларать
Чул касан ăстаçă.
Чупкалать ун умĕнче
Çичĕ-сакăр тарçă.

Мул тавраш kилĕнче
Сыхланать-мĕн хытă,
Пӳрчĕ умĕнче выртать
Сăнчăрланă йытă.

Пĕр çĕрле, тет, ăнсăртран
Қилĕ вăр-хурахĕ,
Мул пирки мана хама
Вĕлерсе пăрахĕ.

Ыйăха сирсе каçсем
Çаплипех шăваççĕ.
Тарăхса çитет хайхи
Чул касан ăстаçă.

Хăй суха туман чухне
Тутлă мар кулачă.
Ирхине ахаль пĕрре
Тулашса ларатчĕ.

Хан лаши хуллен-хуллен
Тикĕс утнă майăн
Хыçĕнче пыраççĕ-çке
Салтаксем нумайăн.

Çук иккен телейĕм, тет
Чул касан ăстаçă, —
Мулшăн хыпăнса каççем
Çывăрма памаççĕ.

Канăçсăр иртет иккен
Пурнăçĕ пуянăн.
Пысăк çар тытасчĕ те
Хан пуласчĕ манăн.

Пирĕн чулçă çавăнтах
Ĕмĕтленнĕ майăн,
Ыйтнă пек, пĕрех самант
Хан пулса та кайнă.

Хыçĕнчен пуç касăртса
Салтаксем утаççĕ,
Кăмăлне тăвас тесе
Янратса юрлаççĕ.

Пулмасан ун чух вĕри,
Хан пулса çеç янтă
Хырăмне сарса кăна
Çӳрĕччĕ паян та.

Ун чухне хĕртмен пулсан
Сар хĕвелĕн вучĕ,
Юртĕччĕ те юртĕччĕ
Унăн акăр учĕ.

Çĕр çинче, тет, типиччен
Ман хĕвел пуласчĕ,
Тӳперен тавралăха
Йăл кулса пăхасчĕ!

Çав самант вăл çӳлелле
Ыткăнса хăпарчĕ,

Ăннипех хĕвел пулса
Вут-кăвар кăларчĕ.

Çĕр çине пăхса тăма
Питĕ те аванччĕ,
Уй-хирсем те вăрмансем
Ешĕлччĕ, кăвакчĕ.

Ансăртран пĕр пĕлĕт ак
Тухрĕ те хупларĕ.
Пăхаймасть ун витĕрех
Сар хĕвел кăварĕ.

Çиленсе çитет каллех
Чул касан ăстаçă:
— Вăйлă мар иккен хĕвел,
Пĕлĕтрен хăравçă.

Пысăк пĕлĕт пулнинчен
Лайăххи çуках-тăр.
Çӳрĕттĕм хуçа пулса,
Пуç таймасăр, паттăр.

Хăй каланă пек, ăшра
Вĕрине пĕтерчĕ,
Пĕлĕт пулса ярăнса
Çумăр лӳшкеттерчĕ.

Хир-хир тăрăх шăвăнса
Хуралса çӳрерĕ,
Хушăран аçа çапса,
Шарлатса кĕрлерĕ.

Çĕр çулхи юмансене
Хускатса силлерĕ,
Карчĕ тĕрлĕ тĕссенчен
Асамат кĕперĕ.

Шӳтерсе иртсе кайсан
Çĕр сывлать те ырă,
Хумханать те хумханать
Лăс пек ӳснĕ тырă.

Чашкăртса çумаваскать
Чул касан ăстаçă.
Çырмасем шывпа тулса
Шавласа юхаççĕ.

Патăр, тет, хресчен валли
Самăр çĕр хăвачĕ,
Кĕркунне çыртса çиме
Çавракка кулачă!

Ӳстĕр çăм сурăхсенче
Хулăм та, çăра та,—
Ачасем валли хĕлле
Кирлĕ-çке кăçатă!

Урăм-сурăм чашкăртса
Мухтанса пыратчĕ,
Сисĕнетчĕ никама
Пăхăнман хăвачĕ.

Курăнатчĕ сарăлса
Пĕтĕм çутçанталăк.
Малалла кайма чарать
Тем инкек сасартăк.

— Хăямат иккен чул ту, —
Тарăхать ăстаçă.
Паттăр пĕлĕтсем унтан
Хăраса тăраççĕ.

Пысăк ту пуласчĕ ман, —
Калама пикенчĕ.
Кăвак тинĕс умĕнче
Ту пулса çĕкленчĕ.

Чул тăва кăтра хумсем
Хытă перĕнеççĕ.
Хăнк тумасть, хаяр пăхса
Ту тăрать пĕччеңçĕ.

Çиллĕ тăвăл ахăрни
Уншăн мар хăрушă.
Аслати те умĕнче
Унсăр вăйсăр, пушă.

Тĕнчере ăна çĕнме
Вăй-хăват та пур-тăр:
Ирхине кĕтмен çĕртен
Янтăрарĕ пуртă.

Аптăрарĕ пирĕн ту,
Ķăн-кан пăхкаларĕ:
Ķăкăрне çапса ватма
Ķам кунта пултарĕ?

Кĕркунне йăмра çинчен
Вĕçкелет-и çулçă?..
Чулсене сирпĕнтерет
Пĕр этем, пĕр чулçă.

Чулçăпа çак сыннăмăр
Ķалаçать хаваслă:
— Çын иккен, тет, тĕнчере
Пуринчен те аслă.

Ĕçлекен, тет, хĕвелтен,
Пĕлĕтрен те паттăр.
Мăшăр аллăм чулсене
Тепĕр хут, тет, ваттăр!
1940

## ТУПМАЛЛИ


| | Стр. |
|---|---|
| Телей юмахӗ | 3 |
| Автан ылханӗ | 25 |
| Кӗслеҫӗпе упа | 33 |
| Юман чукмар | 43 |
| Яппун юмахӗ | 60 |

**Яков Гаврилович Ухсай**

СКАЗКИ

На чувашском языке

Рисунки **В. Малахиева**

Редактор **Ю. И. Скворцов.** Технич. редактор **А. П. Петров.**
Худож. редактор **Н. С. Кириллов.** Корректор **Н. Деомидов.**

НТ 01768. Сдано в набор 3/IX-1960 г. Подписано к печати 9/II-1961 г.
Формат 60×92/16. Объем 4,25 печ. л. Уч.-изд. 3,693 л. Заказ № 1290.
Изд. № 139/60. Тираж 3500 экз Цена 13 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
г. Чебоксары, Володарского, 5.

Цена 13 коп.